РФ Президенчĕн Çырăвне сӳтсе яватпăр

Малашлăхăн тĕп çул-йĕрĕсене палăртнă

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Дмитрий Медведев Федераллă Пухăва Çырупа тухрĕ. Унта хамăрăн проблемăсемпе Раççей çĕр-шывĕ умĕнче паян тăракан тулашри задачăсем пирки сахал мар каланă. Çырура шалти тĕллевсемпе хирĕçлĕхсем те пур. Вăл шутра позитивлисем те. Тĕрĕссипе каласан, ку вăл Д. Медведевăн Президент суйлавĕ умĕнхи программине йĕркелесе çитерни тата аталантарни. Палăртмалла, ку программа Кавказри хирĕç тăрусене тата тĕнче кризисне пула пăсăлнăччĕ.

Çырăвăн пĕр пайĕ хăрушсăрлăха çирĕп тивĕçтерессипе çыхăннă. Ку тĕрĕсех те пулĕ. Хамăра хисеплеме вĕрентес пулать.

Эпĕ шутланă тăрăх, çĕршыв Президенчĕн тата Патшалăх Думин Конституциллĕ полномочийĕсене 6 çула тата 5 çула çити тăсни тĕрĕсех. Çакă вăхăт ыйтни тесе шутлатăп. 4 çул хушшинче çĕнĕ команда йĕркеллĕ ĕçлеме пуçлать кăна, каллех çĕнĕ суйлава хатĕрленме тытăнмалла. Çуллен Раççей Правительствин Патшалăх Думинче хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки отчет тăвасси те кирлĕ тата тĕрĕс. Ку вара регионсен тата муниципалитет шайĕнче те кирлĕ. Мĕншĕн тесен муниципалитет шайĕнчи влаç органĕ çынсен проблемисемпе тӳрремĕнех çыхăнса ĕçлет. Унта суйланă çынсем халăх влаçĕн представителĕсем пулса тăраççĕ.

Çырура коррупципе, бюрократипе кĕрешессипе, социаллă ыйтусене татса парассипе, пенси системипе, вĕрентӳ, сывлăха сыхлас ĕçсемпе çыхăннă саккунсем йышăнассине пысăк витĕм уйăрнă. Пысăк квалификациллĕ професси кадрĕсем хатĕрлес пулсан, Раççей вĕрентӳ системине çĕнетсе улăштармалла. Унченхи çитĕнӳсене пĕтĕм тĕнчипех шута хунă пулнă вĕт-ха. Юлашки вăхăтра эпир çитнĕ чикĕсенчен каялла чакса кайни вăрттăнлăх мар. Ку вăл пирĕн конкурентлăх çине палăрăмлă витĕм кӳрет. Пĕтĕмĕшле Раççей вĕрентӳ ĕçне аталантарассин стратегине çывăх вăхăтрах Правительство палăртĕ. Наци вĕрентӳ стратегине – «Пирĕн çĕнĕ шкул» программăна йышăнĕç.

Президент вĕрентӳ пĕрлешĕвĕ 2010 çула Учитель çулталăкĕ тесе йышăнма чĕнсе каланине ырлать. Чăннипех те сывă пурнăç йĕркин тĕп çул-йĕрне шкултах çирĕплетмелле. Сывлăх сыхлавĕн хальхи системине çирĕплетессипе патшалăх программине йышăнни кирлĕ. Тухтăрсен тата медицина учрежденийĕсен ĕç пахалăхĕпе унăн кăтартăвĕсемшĕн ответлăхĕ ӳсĕ. Медицина ĕçченĕсене ĕçшĕн çĕнĕлле тӳлеме тытăнасси те çакăнпах çыхăннă ĕнтĕ.

Обязательнăй медицина страхованине çĕнетмелле. Хальлĕхе практикăра пациент сипленме хăйне килĕшекен тухтăра суйласа илме пултараймасть. Ирĕклĕ медицина страхованийĕ питĕ ерипен аталанать. Медицина страхованийĕн системине финансласа тăрассин шайлашулăхне патшалăх йĕркелесе пымалла. Сывлăха сыхлас ĕç ыйтăвĕсене патшалăх отрасльшĕн хăйĕншĕн мар, çынсен пурнăç çулĕ вăрăмлантăр, ачасем çураласси ӳстĕр тесе татса пама тивĕç.

Аслă ăру çыннисене кирлĕ медицина пулăшăвĕ парассине, йĕркеллĕ пурăнма май паракан пенсипе тивĕçтерессине манмалла мар. Вĕсем çакна чăннипех тивĕç.

Раççей Федерацийĕнче юлашки 3 çул хушшинче сывлăх сыхлавĕн проблемисене татса пама 78 миллиард тенкĕ укçа тăкаклана. 2011 çул тĕлне ку хисеп 1,3 хут ӳсмелле. 2009 çултан тытăнса наци проекчĕн çĕнĕ икĕ енне пурнăçа кĕртме тытăнатпăр. Кусем вĕсем – сывă пурнăç йĕркине çирĕплетесси тата онкологи чирĕсемпе чирлекенсене медицина пулăшăвĕ парассине çĕнетесси.

Юлашки вăхăтра çĕр-шыв пурнăçĕнче кашни çыннах пырса тивекен палăрăмлă лайăх улшăнусем сахал мар пулса иртрĕç. Апла пулин те татса памалли ыйтусем те сахал мар. Раççей Президенчĕн Çырăвĕ çĕр çинчи пахалăхлă та сывă пурнăçа тивĕçтермелли тĕп çул-йĕр пулса тăрĕ.

В. ДАНИЛОВ,
Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ,
районти тĕп больницăн тĕп врачĕ.

Информаци кунĕнчен

Чунпа та пĕвĕмпе хитре пуласчĕ

Ăçта черченлĕх те илем, çын чунĕ çавăнта васкать. Пĕчĕк пепке те аллипе илĕртӳллĕ чечек, капăр тетте енне туртăнать. Хĕр тени вара пушшех те хитререх пулма, хăйне, юлташĕсене, йĕкĕтсене килĕшме тăрăшать. Хитрелĕх патне ăнтăлни ырă та ăшă туйăмсем çуратать. Ăçта илем – унта телей. Камăн вара телейлĕ пулас килмест-ха?

Хăçан çын чăн-чăнах илемлĕ-ха? Мĕнле çынна хитре теме пулать? Илĕртӳллĕ пулас тесен мĕн тумалла? Çак тата ытти нумай ыйту çине хуравсем шырарĕç районти тĕп библиотекăра Муркаш шкулĕнчи 9-мĕш класра вĕренекен хĕр упраçсем. Тĕп библиотекăра «Çамрăксем – çирĕп сывлăхлă пурнăç йĕркишĕн» акцие халаллана «Чунпа та пĕвĕмпе хитре пуласчĕ» информаци кунĕ иртрĕ.

Иртенпех библиотекарьсем вулавçăсене «Çамрăк ăру – çирĕп сывлăхшăн» литература куравĕпе паллаштарчĕç. Куракансене «Здоровье», библиотека çырăнса илекен «Добрые советы», «ФиС» журналсемпе кĕнекесенчи çирĕп сывлăхпа хитрелĕх вăрттăнлăхĕсем çинчен калакан статьясемпе специалистсен комментарийĕсем тата усăллă канашсемпе рецептсем уйрăмах кăсăклантарчĕç.

Палартнă вăхăтра информаци кунĕнчи «çавра сĕтел» часах хăнасемпе тулчĕ, тавлашуллă чĕрĕ калаçу пуçланчĕ. Районти тĕп больницăри Г.И. Львова врач-гинеколог хĕр пулса çитнĕ тапхăрти вăрттăнлăхсене уçса пани çамрăк хĕрсене кăмăла кайрĕ. Сывлăхлă пулас тесен ӳт-пĕве тасалăхпа тирпейлĕхре тытса тăмалли, кун йĕркине пăхăнса пурăнмалли çинчен, йĕркесĕрлĕхпе явапсăрлăх чире яма пултарни пирки питĕ ăнланмалла та интереслĕ каласа пачĕ. Сывлăха çамрăкран упрасан çеç вăрăм ĕмĕрлĕ те телейлĕ, чунпа та пӳ-сипе илемлĕ амăшĕ пулма пултарни çинчен асăрхаттарчĕ.

Диагностикăпа консультаци центрĕнчи Н.А. Миронова психолог ирттернĕ «Хĕрсен вăрттăнлăхĕ. Хĕр пулса çитни» тренинг та пурне те кăмăла кайрĕ. Тренинг çамрăксене пурнăç çулĕ çине çĕнĕлле пăхма, малашлăха шанса тĕллевлĕ пурăнма пулăшать. Чун-чĕрепе ырă пулни, туссене ырă сунни кашнин патне лайăхпа таврăнать. Хитре те сывă пуласси пурнăç ăннинчен те килет. Пурнăç çине çăмăллăн пăхса пур телее, савăнăç-ырлăха çухатас марччĕ, нумай-нумай çул пур енчен те хитрелĕхпе çуталаскĕ тесе пĕтĕмлетрĕç хăнасем хĕрӳ калаçăва.

Информаци кунĕ сывлăх çинчен калакан дисксене, видеофильмсене пăхнипе вĕçленчĕ. Каçхи ĕнтрĕк сĕмĕ çапсан та çамрăксем килĕсене васкамарĕç. Сывлăх теми çамрăк ăрава шухăша яни савăнтарать. Эппин, пурăнатпăр-ха.

Э. ДИМИТРИЕВА,
районти тĕп библиотекăн инновациппе методика пайĕн ертӳçи.

Воспитани ыйтăвĕсемпе

Кайран ӳкĕнмелле ан пултăрччĕ

Пуласлăх... Мĕнле пысăк пĕлтерĕшлĕ çак сăмах. Этем обществи ăруран ăрава çак пуласлăхшăн, пирĕн пуласлăх паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен лайăхрах пултăр тесе пурăнман-и-ха?

Мĕн куратпăр-ха эпир паян? Мĕнлерех-ха пирĕн пуласлăх? Тĕрĕслĕхе куçран пăхма хушнă халăхра. Апла пулсан суеçтерер мар...

Ял пурнăçĕ. Мĕнпе уйрăлса тăратьха вăл каярахринчен, 1960–1970-мĕш çулхисенчен? Мĕнле улшăнса пыратьха унăн пуласлăхĕ?

Эпĕ мĕн ачаранах хамăн пурнăçа ялпа çыхăнтарнă. Çавăнпа та пулса иртекен улшăнусем те куçкĕретех. Еплерех ĕçлетчĕ ун чухне ял-йыш е уйхирте, е йĕтем çинче... Пурнăç условийĕсем вара паянхинчен миçе хут урăхларахчĕ. Ял çыннин кунсерен вуттине те хутмаллаччĕ, çулсерен вутă хатĕрлемеллеччĕ, пирне те тĕртмеллеччĕ, кунсерен колхоза та ĕçлеме тухмаллаччĕ, ачи-пăчине те, выльăх-чĕрлĕхне те пăхмаллаччĕ...

Мĕн куратпăр-ха вара эпир паян? Пурнăç условийĕсем ял çыннишĕн лайăх еннелле улшăннине никам та курмасăр тăма пултараймасть. Пурте тенĕ пекех кил-çурта газпа хутса ăшăтать, «Ильич» лампочкисем кашни килтех, йĕркеллĕ çулсем те нумай çĕрте пур, шыв та çырмаран çĕклеместпĕр. Ял çыннине ĕçле, савăн, пуянлан темелле кăна. Анчах пуласлăх пур-и-ха паянхи ял çыннин? Ман шутпа, нимĕнле пуласлăх та çук.

Пурнăç условийĕсем лайăхланса пынă май ял çыннин культура шайĕ мĕнле ӳссе пырать-ха? Малтанхи вăхăтра ялта пĕр-икĕ çын кăна эрех ĕçнĕ пулсан, халĕ вара ĕçменни пĕр-икĕ çын юлнă пулĕ. Пирус туртасси вара хĕрсем çине те куçрĕ. Ялсенче çамрăксем çукпа пĕрех. Пуррисем те çемье çавăрса тĕплесе пурăнма шутламаççĕ. Хĕрĕсем те йĕркерен тухса кайрĕç. Мĕн патне пырса тухатпăр-ха каплах пулсан малашне? Мĕнле пуласлăх патне?

Çынсемпе каласатăн та тĕлĕнетĕн: нумайăшне уй-хирсем çум курăкĕ айне пулни те, фермăсем пĕтни те, ялсенчи шкулсене хупса пĕтерни те нимĕн чухлĕ те канăççăрлантармасть. Малтанхи вăхăтра пулсан ял çыннисем уйхирти çум курăка кăна мар, хамăрăн выльăх-чĕрлĕх çӳремелли улăх-çарантине те кĕреçесемпе касса тасататчĕç. Халĕ вара ялсем çывăхĕнчи çăлсем те никама та кирлĕ мар, пур-çук çăлсем патне пыма та май çук. Пĕтĕмпех вĕлтĕренпе хупах айне путнă.

Мĕнре-ха çакăн пек лару-тăрăвăн тĕп сăлтавĕ? Ман шутпа, пирĕн патшалăхра этем ăрăвне тĕрĕс воспитани парас тесе ĕçлеменнинче. Мĕн курать-ха кунсерен ял çынни телевизорпа? Ку вăл каламасăрах паллă: никама кирлĕ мар тĕрлĕрен рекламăсем, вăл шутра эрехсăра пирки те, ют çĕр-шывсенчен килекен тата юлашки вăхăтра хамăр патра та туса кăларакан кутлă-пуçлă тĕрлĕрен фильмсем тата ытти те. Тар юхтарса, таса чунлă пулса çĕр-шывшăн вăй хума вĕрентекеннисем вара çук. Укçана е выляса илме, е вăрласа тупма кăна вĕрентеççĕ.

Çамрăксене патриотизмла воспитани парасси те кирлĕ шайра мар. Малтанхи вăхăтра ӳкернĕ кинофильмсене паянхисемпе танлаштарма та май çук. Ăçта-ха вĕсем паянхи çамрăк гвардеецсем, Матросовсем, стахановецсем, Ангелинăсем..? «Сенкер экрансем» çинче ытларах чухне иртнĕ пурнăçа хурлаççĕ. Ман шутпа çакă вăл çамрăксемшĕн питĕ сиенлĕ. Нивушлĕ малтанхи вăхăтра çынсем паянхинчен те киревсĕртерех, юрăхсăртарах пулнă? Апла пулсан епле-ха çавăн чухлĕ заводсемпе фабрикăсем, электростанцисем, миллионер колхозсем, совхозсем, пиншер километр чукун çулсем тата ыттине те тума пултарнă? Совет çынни космосра та пĕрремĕш пулнă. Пирĕнтен Америка та хăраса тăнă, пире патшалăх вырăнне хунă. Малтанхине хурлани, шута хуманни, ман шутпа, хамăр асаттесенчен, асаннесенчен, атте-аннерен кулни пулать.

Воспитани ыйтăвĕсемпе тĕрĕс ĕçлетпĕр пулсан мĕншĕн-ха пирĕн çулсерен эрех ĕçсе вилекенсен тата ĕçме тытăнакансен, СПИД-па чирлекенсен, çынна вĕлерекенсен, наркомансен тата ытти киревсĕрлĕхсен шучĕ чакма мар, ӳссе пырать? Мĕн тăватпăр-ха эпир, ашшĕ-амăшĕ, хамăр ачасене çак киревсĕрлĕхсенчен çăлса хăварас тесе? Нумайăшĕ ача сачĕсем, шкулсем çине шанать. Ман шутпа ачаран çын тăвасси чи малтан ашшĕ-амăшĕн таса тивĕçĕ пулса тăрать.

Кашни ачан кун йĕрки пулмалла. Ачаранах вăхăта усăсăр сая яма хăнăхтармалла мар. Халĕ хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ ачисене комьютерсем илсе парать. Анчах та режим пирки манаççĕ.

Мĕн кăна кирлĕ маррине тумасть пулĕ ашшĕ-амăшĕ хăйсен пĕртен-пĕр пепкишĕн. Юлашки вăхăтра кашни ачан тенĕ пекех кĕсье телефонĕ пур. Ачисем вара вĕренме манса кайсах уроксенче вĕсемпе выляса лараççĕ. Нивушлĕ çак телефонсем ача организмне сиен кӳнине пĕлмест ашшĕ-амăшĕ? Ахальтен мар ĕнтĕ çак телефонсене туса кăларакан фирмăсем ученăйсем тĕрĕслесе палăртнă фактсене халăха пĕлтерме чараççĕ. Тĕслĕхрен, ача тăхтав вăхăтĕнче икĕ минут хушши телефонпа каласрĕ пулсан, унăн пуç мимийĕ пĕр сехет çурă хушши нормăна лараймасть. Тата хăрушăраххи – пĕр вунă çултан пуç мимин шыççипе чирлеттерет. Ку вăл тăнлă-пуçлă çынсем тĕрĕсленĕ фактсем. Ашшĕ-амăшĕ, шухăшласа пăхăр!

Эпир çитĕннĕ вăхăтра пушă вăхăта усăсăр ирттермен. Çитменнине пулнăи-ха вăл пушă вăхăт? Çавăнпах аслисемпе пĕрле колхозра ĕçленĕ, килте те ĕç мăй таранах пулнă. Ачана ĕçе юратма вĕрентесси каллех ашшĕ-амăшĕнчен ытларах килет. Ĕçрен пăрăнакан ачаран нихăçан та обществăна юрăхлă çын пулаймасть.

Шкул ачисем аслисене, хăйсене вĕрентекен учительсене хисеплеме пĕлни каллех йĕркеллĕ çын пулма май парать. Шкулта пулнă май чылай шкул ачин çак питĕ кирлĕ йĕркелĕх çуккине курма пулать. Ашшĕ-амăшне хăть хисеплеççĕ-ши кун пек ачасем? Ман шутпа çук.

Пирĕн çĕр-шывра миллион ытла килсĕр-çуртсăр ача пур тесе çыраççĕ хаçатсенче. Апла пулсан çак ачасене çуратакан амăшĕсене çын тесе калама май пур-ши? Çакă вăл каллех ашшĕ-амăшĕ ачисене намăс е çылăх пурри пирки вĕрентейменнинче, хăйсем те йĕркеллĕ пурăнманнинче.

Пирĕн çĕр-шыв пуян тетпĕр. Çĕр айĕнчи пуянлăх вăл пире Турă панă ырлăх теççĕ. Анчах та патшалăхра пурăнакан çынсем хăйсен этем чысне çӳллĕ шайра тытмасан, ӳссе çитĕнекен ăрава тĕрĕс воспитани памасан, çылăх мĕнне мансан, пирĕн пуласлăх çук. Кун пек çынсене нимĕнле пуянлăх та çăлса хăвараймĕ.

Ашшĕ-амăшĕсене манăн çапла калас килет. Пирĕн ачасен пуласлăхĕ ыттисене мар, хамăрах ытларах интереслентермелле. Çавăнпа та воспитани ĕçне йăлтах хăвăр çине илĕр. Паянхи киревсĕрлĕхсенчен хăвăр ачусене упраса хăварма тăрăшăр. Унсăрăн ӳкĕнмелле пулĕ.

П. ВОРОБЬЕВ,
депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи ашшĕ-амăшĕсен комитечĕн председателĕ.

Çамрăксен ыйтăвĕсемпе

Çамрăксемпе тĕплĕн ĕçлемелле

Аслисем çеç тăрăшнипе çамрăксем сывă пурнăçпа пурăнасси иккĕлентерет. Шкулсенче тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ-ха, анчах шкултан тухнисем те çамрăксемех вĕт. Çак категорипе вырăнсенче япăхрах ĕçлени туйăнчĕ иртнĕ çамрăксен конференцийĕнче пулнă май. Унта ял тăрăхĕсенчи, предприятисемпе организацисенчи çамрăксен канашĕсен ертӳçисене, районти çамрăксен Парламенчĕн членĕсене йыхравланăччĕ.

Анчах ял тăрăхĕсенчи çамрăксен ертӳçисем питĕ сахал пуçтарăнчĕç. Килменнисен сăлтавĕсем те пурах ĕнтĕ. Тен сăлтавĕ çак ĕçе обществăлла майпа туса пынипе çыхăннă? Вĕсем пурте ĕçлеççĕ. Тăрăшса ĕçлекен вара хăйĕн ĕç вырăнне хакла хурать. Мĕн пур вăя унта ярать. Çитес çул Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Д. Медведев çамрăксен çулĕ тесе палăртрĕ, апла пулсан çамрăксен политикине пĕрлĕхлĕ туса пыма ял тăрăхĕсенче обществăлла ĕçченсемпе кăна çырлахмалла мар пулĕ...

Пĕр çирĕм çул каялла çамрăксене пурнăç çулĕ çине тăма вăчăрари сыпăксем пек хатĕрленĕ. Çак сыпăксем вара пĕрпĕринпе çыхăнсах пынă: октябренок – пионер – комсомолец... Халĕ, шел пулин те, «сыпăксем» хăйне май пурăнни сисĕнет. Çавăнпа та район шайĕнче те çамрăксемпе ĕçлесе пыма йывăрри курăнать...

Çамрăксен конференцийĕнче вара районта наркотиксем тавра лару-тăру çивĕч пулнине палăртрĕç. Ку вăл Муркаш районĕ Шупашкара çывăх пулнипе тата район урлă федераллă çул иртнипе те çыхăннă. Çавăнпа кашни ял тăрăхĕнчех çамрăксемпе çак ыйтупа тĕл пулусем ирттерме тăхтаса тăмалла мар. Унта усă курма районти ача-пăча библиотекинче ĕçлекенсем тĕрлĕ буклетсем тата компьютерпа кăтартма ятарлă клипсем хатĕрленĕ. Муркашри тĕп больница специалисчĕсем те памяткăсем валеçсе пачĕç. Психолог канашĕсем те вырăнлă пулчĕç. Конференцинче панă информаципе çамрăксене туллин паллаштармалла.

Профилактика ĕçĕсене вара тĕплĕн тумалла, хут çинче кăна мар. Çамрăксен интересĕсене кура секциемпе клубсем йĕркелемелле. Тĕрлĕ ĕçсене явăçтарма тăрăшмалла. Сăмахран, конференцинче çамрăксене донорсен йышне кĕртессипе тимлемеллине каларĕç. Ку Чăваш Республикинче Юн службин программине аталантарассипе çыхăннă. Çавăнпа та малтанах юн парасси пирки вĕсем патне тулли информаци çитермелле. Ку ыйтупа ял тăрăхĕсенчи çамрăксен канашĕн ертӳçисен тата медицина ĕçченĕсен ытларах тăрăшмалла пулать. Анчах та вĕсем ĕçленĕ вăхăтра ыттисен канма юрать тенине пĕлтермелле мар ку. Пурин те ыйтусене пĕрле сӳтсе явса çамрăксене пур енлĕн информаципе тивĕçтермелле, хавхалантарса пымалла.

Н. НИКОЛАЕВА.